К 84.09
К27
4-38108

Марина Карягина

# ТӐВАТКӐЛ ТӖЛӖКСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-038108

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначённого здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

*Аннепе аттене халаллатăп*

Пурнăçра кашни самант – пĕтĕ. Унсăрăн самантсерен самант çуралса тăмĕччĕ...

*Станислав Юхтар*
*ўкерчĕкĕсем умĕнче*
*шухăша кайни.*
*(1995 çул, Пăлхар*
*патшалăхĕ 1100 çул*
*тултарнине*
*халалланă курав).*



К 84.09(=Чув)
К 27

Марина КАРЯГИНА

ТĂВАТКĂЛ
ТĔЛĔКСЕМ
тетралоги

# пĕтĕ чăмăр

поэма
пĕрремĕш кĕнеке

8.01.03

художникĕ
Станислав Юхтар

ШУПАШКАР
«Руссика» - 2002

К84.09(=чув)6-51

ББК 84 Чув
К21

4-38108

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5-87315-026-5

ПРОВЕРЕНО
20/10 2 8 СЕН 2017

КАРЯГИНА М.Тӑваткӑл тӗлӗксем: Тетралоги / Марина КАРЯГИНА;
Худож.:Станислав Юхтар.- Ш.: Руссика, 2002.- Т.1 :Пӗтӗ чӑмӑр.- 48 с.: ил.

© М.Карягина. Текст 2002
© С.Юхтар. Рисунки 2002
© О.Улангин. Макет 2002

*Эпир Сăмахăн тĕнчетăваслăх хăватне, пире Пултарнăскерĕн чĕлхи çинчи сăмахсене ĕмĕрсерен манса та çухатса пыратпăр. Ман ырату – тăван чĕлхе сăмахĕн суранĕ. Суранăмăра вулаканран пытармасăр, Сăмахăмпа иксĕмĕр шăнкăрти чĕлхемĕрĕн чĕрĕлĕх шывне шыраса Пуçламăшнелле таврăнатпăр: малашлăх çулĕ Пуçламăш витĕр-мĕн (ĕмĕрĕмĕре те ачалăхăмăр витĕр ĕмĕрлетпĕр-çке!) Этемлĕхĕн пĕрпĕтĕм чĕлхи те унтах...*

*Сăмах та, чăваш тĕнчене çичĕ сийлĕ курнă пек, ман шутпа, çичĕ сийрен тăрать. Пурнăçри кашни япалапа пулăмра пытарăннă вăрттăнлăх ăсĕ мана шав шыравра пурăнма илĕртет, туйăм хăвачĕ çав сийсен уçлăхне хăйле тĕпчесе каласа парасшăн.*

*Этемлĕх кайăксенчен калаçма вĕреннĕ текен сĕмленӳ пур. Чăваш ăс - тăнĕ те астăвать пулас çакна: ача ир калаçса каяймасан “çурхи кайăксем илсе килĕç-ха чĕлхине” тет. “Тавах, анне, çуратнăшăн, чĕкеç чĕлхи пилленĕшĕн” тесе юрлать. Йăхăмăр пехилленĕ чи çивĕч сисĕм-туйăмпа “чĕкеç чĕлхин” пуянлăхне çĕнĕрен уçса, ăна ӳлĕмхи ăрăвăмăрсене пуянлатса тавăрса парасчĕ.*

*Вулаканăм, ыратуллă шухăшăмсем туйăм ашкăрăвĕпе пĕрлешсе, чуна асаплантармасăрах çырăнман йĕркемсем – сана та вĕсем шухăшлаттарччăр, ыррăн асаплантарса çĕнĕ туйăмсем вăратчăр. Сăваплăлатчăр.*

автор



## 1.

таçта,
ĕмĕр текен Чĕм* хӳттинче,
çавра кунсем хĕвел ачи пуль – сарă
сĕм тĕттĕмрен хăранăн çут тĕнче
кăк-ăрусен малашĕшĕн хăрарăм
кунта,
ĕмĕр текен Чĕм хӳттинче,
ĕмĕртекен хĕрарăмсен кăкăрĕсем
тĕнчемĕр чĕмĕ-хĕмĕ-сĕмĕ витĕр
ĕмĕрсене çăласшăн карăнаççĕ –
кунсем чĕре суришĕн макăраççĕ

ав мĕншĕн çутатаççĕ çăлтăрсем!

---

**пурнăç*

## 2.

кунта
каруççельсен кăна
кумаççĕ кӳмисем
куç улмине татса каяс пек
хĕвел тавра харам
чупса çӳрерĕм –
(çаплах хăра-хăра, ав,
хăрать чĕр эрĕм) –
мĕне кура хура хăяв* –
пĕлмерĕм...

*тавăру

## 3.

хушăран
хĕвеллĕ пĕлĕт,
çăлтăр куçлă каçпултти,
ут утланнă кун юртти,
кивĕ тĕлĕк, кĕвĕ; ĕлĕк,
пуласси пулас пек сĕмĕ,
вăрлăхра пурнан пур ĕмĕр... –
йăлт манра пек:
йăлт хамра çӳреп йăтса,
вĕççĕр тенĕ
тĕнчене
çак пӳпе тăвăрлатса –

вăхăта ватăлтарса



## 4.

сăмах ачи Сăмах ăшне пытаннă
(упашкасем лупашкана пытаннă) –
курнăçура упраннă пек çура
(эс курнăç-курнăç та ăна çурат)

тиеччĕр тиеве – т-ӳсем: пур хăлă-
пĕ тĕменĕн* те – чĕр шăмă та тан мар!
чиен чее: ӳкет те таптанма,
çырли çĕрет – шăмми ярать тымар

кунта кашни турат
нӳр вырăншăн кăн-тарăн-ать

*тĕнче



## 5.

кашни ç̆ăлра
сан сăнару пурнать –
эс пăх çăла:

(хăмсарупа пăхан –
хăмсарупа пăхать:
сехре хăпать)

пур айă-пĕ – тĕ-кĕрлĕхре:
вăл тĕнчене
хăрахлăхран çăлать...

## 6.

юханшывсем – вĕçеншывсем пек
юхма манса вĕççе çӳреççĕ
(куç витермен çуначĕсем пиреччĕ!)
юхассисем – вĕсен çур ĕçĕ
тĕп ĕçĕ –
пĕтĕçӳ...

## 7.

пĕтĕм путăк ӳпленет – ӳплеленет:
юр хӳнĕ май çӳл тӳпене çул кĕскелет
хĕл куçкĕскийĕнче – кĕрсем пек
тĕмескесем – темĕскерсем пек!
:юр ай! - ĕнче юрай* çеçкеленет

*çеçпĕл*

## 8.

кăнтăрлахи саспа калаçнăн илĕм-тилĕм
кунта эс – ют
сассун екки, кĕвве вырттас йĕрки
ытла та уйрăм палăрнă пирки

ху тĕллĕн-иç шалти саспа юрлатăн
сăмахĕ те, çемми те мар-ха – шухăшĕ
сăмахĕ-çемми витĕр сăрхăнса
шăп сывлăша çеçке çурса килет –
шур çеçкипе юр-лĕпĕш чĕннĕн çĕмĕрт –
йăлт çĕмĕрет –
ç-ĕмĕр-ĕлет –
пĕрех сивве çĕнет
куç ĕнчи пек çырлисене
(куç тĕпĕнче тĕс илнĕ ĕнчĕ пек) –
сире сĕнет

## 9.

пурнăç-унта
тăван-тăван,
тăван-тăван...
тăва аван!
эх, тус-тăван,
тăвассине
тусан –
тусан...

:çӳпĕ тĕпĕ!

4-38108

Национальная библиотека
Чувашской
Республики



## 10.

мĕн чухлĕ сасă! –
илтми те пултăм,
итлеми те

ман шухăш сассăр:
илтеп те эпĕ –
тĕлĕнетĕп

эй, сассăрлăх, ху ма
таçта тĕпĕртететĕн?

:чăмса курман хума
чăн сас – тĕпĕрте, тетĕн

## 11.

эпĕ тĕпсĕр асăма анса
йăх-ăрăва çӳретĕп палласа:
йыхăрăва куçан кашни сасса
(кунта сассем пăр шывĕ пек таса!)
çак çилсемпе юнашарах çӳренĕ,
хум тинĕсрен тухса каяс пек йĕнĕ...
çуран çӳренĕ пуль – пулман-тăр учĕ,
çарран çӳренĕ... – пушмакланнă ӳчĕ,
çара ура пач уйрăм йĕр тăвать! –
çапла эп паллăп, йăхăм, çав тăва:
çуха-тăва, ыра-тăва, юра-тăва...
тăван,
пăхсассăн пăх-ха тип аçа
çапса п(ă)рахас пек, иçмасса! –

килес ăру килет аса!

## 12.

хăрах ура çинче тăрать –
çапла пур йывăç пурăнать:
çулçă сарать
çеçке çурать
çав çӳллĕшре Чĕр çăмарта усрать!
хăй ăшĕнче çул çаврине сăвать
тымарĕсем çине вăрри çăвать...



## 13.

шĕкĕр çуртсем –
шăкăрин!

çурт мар –
çурт-
ар-
нă
вăр-ман-сем

кавар туса
тымар ярас-тăк
тăрса кĕр кĕрлĕç
ху-навсем

çав
вăр-ман-
сем –
ă-сан-
нисем



вĕсем
шăпланнă
çеç-çке
аса-
пĕ – тĕ-
нче
салатнă
çеçки-
нче

**14.**

ытла та тăнăç кĕр ĕшни –
(пĕтĕрĕнмешкĕн кĕрĕшни!) –
пĕтĕленме манса каяссăн...

ăс çеç хускалчĕ пек хăй ăссĕн

тăнлав сасне илтсе тăратăн
йăва йăтса ларан туратăн

ĕшнеçĕм! ман тавра тăвать вăл
сыхлавлă, ăрăмлă тăваткăл

хурав кĕтет пуль тăн:
... тĕнче
явапĕ – тĕнĕл пăнчинче!

## 15.

кашни ҫырма тымарланасшăн:
юрри – тымарлă марринче...

кашни ҫырма тымарланасшăн:
ҫӳле-тĕк – вулă варринче! –

кашни ҫырма тымарланасшăн:
юхас-тăк – юнтымарĕнче! –

сикес-тĕк – ҫын тăнлавĕнче!



## 16.

ӗмӗрлӗхре никам та çук, элле –
кӗр еннелле кун кӗ-скелет –
пурри – пӗр авӑк

апла ӑçтан кун чухлӗ савӑк?

## 17.

куç тарӑнӑшӗ – (таврӑнӑшӗ!) – витӗр
каç çарӗсем килеççӗ таптаса
каçарӗ сӗм:кил-ӑшӑм тап-таса
(куç ӑшшине туять-и чаплӑ питӗр?)

шӗл-кӑварпа сывлап – ӳпкев ан тӑвӑр:
тӳсме çук пӑчӑ тӑкӑр-
лӑкӑр (-лӑкӑр-лӑкӑр!)-та
(эп – хир лаши йӗвенлӗ тапӑрта)
ӳпкемшӗн сиплӗ тенӗ тӑвӑр – тӑвӑр!

## 18.

чӗм – чӗмере!*
иккӗн выртса
виççӗн тӑракансем
сараççӗ çак
вӗлерекен чире...

**чир*

## 19.

ыр-анӑмсем!
ёнер акса хӑварнӑ анасем!
ыран пуласси́сем ёнер пуҫланнӑ:
пур самана ҫак саманта пуҫтарӑннӑ –

мӗн тарӑнӑш
Кайнисемпе Килессисем пур анӑш?

## 20.

тĕмен – темĕн,
этем – тем...
эп темтепĕр
тем те тем...

тем те пур та –
ним те çук!
хамра куртăм
ăçтиçук



## 21.

пĕр шутламасăр
пĕтĕттĕм –
пĕр шутламасăр
пĕтĕ тĕм!
пуласлăх,
шӳтĕм!
аса асаплантар апла,
апла ан тар –
(кун асапĕ – тĕттĕм) –
пул çут асаплă!

22.

тĕнчене çăлать-мĕн -ĕç:
пĕтĕç-ĕç!

## 23.

çак тĕменре
пĕтĕм ĕç –
пĕт е пĕтĕç:

ху – пĕт, ĕçӳ – юлтăр
тени мар-и
пĕтĕçӳ?



## 24.

Шапа хуранĕ – хурлă шыв шавне,
чулсем упраççĕ хĕрупраç чунне:
чул варĕнчи пур типĕ тĕшсене
çилсем тупса вĕçтерĕç мал енне.

## 25.

эпĕ – тĕкĕрĕр кăна!
эпĕ – тĕлĕкĕр кăна!
кĕтĕр юлашки куна –
кевер чул пулса хунап
ан ўкер çĕре – çĕтет!
(тăпрара тĕнче çĕрет) –
ман тупра пулма черет

## 26.

ТĔНЧЕ тени мĕнле пуç-ланнă?
ама-ланнă? –
этем те çавăн пек пуç-ланнă,
ама-ланнă –
тĕнче пире хăй хурăмлă ăс-ланă:
(эП – хĕрӳ – сан вĔТĔ ĕренкӳ!)
эп – ама – тĕнчемĕн ĕмĕртешĕ,
хĕрӳ чĕрем хĕвелленет варти ТĔНЧЕШĔН



## 27.

тĕнче амалăхĕ çак Çĕрĕм –
çĕркаç тĕллентĕм эпĕ, тĕвĕ:
çĕн çуралу, тен, вилĕм евĕр?
(кашни хĕн-терт – çĕн çуралу!)
варти çурашăн çуралу
чăн вилĕм пек хăрушă мар-им?
пурпаллăмарлăхăн çă-варĕ –
сехрехăптармăш çă-вăр-
шăн! –
кӳтсе чĕтрет хĕмри кăвар,
юрать тĕнчемĕр хĕсĕр мар!

## 28.

çăмартари чĕп пек курап:
тӳпе хуппи çуркаланать
хĕл – туйăнать... çур – каланать...
çу – çурăм пек çурлаланать:
аçа та çумăр, çил – çырлах! –
тĕнче кăварçырлаланать –
тен – лаштăр-р?.. –
чĕп тухнипе кăна танлаштăр
ку, курак!

## 29.

кунта
сӗт те кӗвӗлмест,
тӗс те, тус та кивелмест,
тӗлӗксем кӗвӗленмеççӗ,
пӗлӗтсем хӗвелленмеççӗ
(манӑн хӗвел тӳпере! –
сых ятне кала пӗрре)

çуннӑ, пӗт-н-ӗ – тетӗр-и?
эпӗ, тӗреме тӑрри,*
çак хӗвел çинчен калам
пӗтӗ чӑмӑра салам!

---

*çӳллӗш хӑрушлӑхӗнчен шикленмен çын



**30.**

хĕл килĕ – чĕпĕтĕ,
хĕм килĕ – сирпĕтĕ,
çил килĕ – типĕтĕ

тĕнче пĕтĕ,
тейĕ ӳкĕтĕр,
ӳкĕнĕр!

эп те кĕрĕп
ӳкĕте:
тĕнче – пĕтĕ,
тейĕп,
кĕтĕр!

(ПĔТĔ ТĔНЧЕ ПĔТĔ-И?!)

:пĕтĕленет тĕмен,
пĕтĕ-ленет –
йăлт мăй тавра темме
пĕтĕ-рĕнет!

*1995, 2000 çç.*

Марина Федоровна Карягина

# Тăваткăл тĕлĕксем / Квадратные сны

Тетралоги / Тетралогия

Пĕрремĕш кĕнеке / Первая книга

## Пĕтĕ чăмăр / Чрево-шар

Поэма

На чувашском языке

Рисунки Станислав Юхтар

Редактор А.И.Дмитриев
Макет, верстка О.А.Улангин
Корректор М.Ф.Степанова

Типография издательства «Руссика»
Лиц. ПЛД № 27-50 от 19.10.98 г.
Чебоксары. ул.Афанасьева, 12
Заказ №345.
Тираж 300экз.


издательство
РУССИКА